

Проект Чăваш Республикин цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пурнăçа кĕрсе пырать

**Пирĕн пĕрлехи тĕллевĕмĕр – юратнă республикăпа Тăван çĕршывăмăр ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕçлеме хатĕр, ăслă-тăнлă та тĕрлĕ енлĕ аталаннă, конкуренци пултаруллăхĕллĕ тата яваплă çынна пăхса çитĕнтересси.**

**Хальхи саманара тивĕçлĕ, паха тата юрăхлă пĕлÿ – асăннă сферăри патшалăх политикин тĕп принципĕ. Чăваш Ен правительстви вĕренÿ ĕçĕпе кăсăкланать кăна мар, çав вăхăтрах хăтлă тăвас тесе пысăк пĕлтерĕшлĕ программăсене пурнăçлать.**

# Воспитани пахалăхне лайăхлатассишĕн



♦ Н.Степанова наградăпа чысланă самантра

**Паян физкультурăпа спорт валли вăхăт уйăрасси кашни çемьешĕн тенĕ пекех кулленхи пурнăç йĕрки пулса тăрать.**

**Патшалăхпа муниципалитет влаçĕн органĕсен общество организацийĕсен тĕллевĕ – массăллă спорта малалла аталантарма майсем туса парасси, республикăра пурăнакансен спортпа çыхăннă кăнăвне йĕркелеме пулăшасси. ГТО комплексĕ физкультурăпа массăллă спорта малалла аталантармалли тĕп проект шутланать. Унсăр пуçне, хальхи хула инфратытăмне, парк тăрăхĕсенче физкультурăпа туслашма пулăшмалли майсемпе тивĕçтермелле, çамрăксен хушшинче хальхи вăхăтра хисепри спорт тĕсĕсене аталантарма условисем туса памалла.**

–Университетсенчи, колледжсемпе техникумсенчи пĕрремĕш курссене, çавăн пекех мĕнпур шкул ачипе студента, пĕлÿ тĕнчине илсе каякан çулпа малалла утăмласа çирĕп ăс пухма тăрăшакансене ăшшăн саламлатăп. Çĕнĕ çĕнтерÿсем тума ăнтăлни сире вĕренÿ çулĕ тăршшĕпех вăй парса хавхалантарса пытăр!–çавнашкал ăшă сăмахсемпе савăнтарнă çамрăксене Пĕлÿ кунĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Олег Николаев.

Чăваш Енри 414 шкулта çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче пĕтĕмпе 145 пин ача пĕлÿ илĕ. Вĕсенчен 17 пинĕшĕ – 1-мĕш класа каякансем.

Çурла уйăхĕн 20–21-мĕшĕсенче Чăваш Енри вĕрентÿ тытăмĕн ĕçченĕсен республика конференцийĕ ĕçленĕ. Ăна онлайн мелĕпе ирттернĕ. Унта пирĕн районтан та хутшăннă.

«Ачана воспитани парасси тата аталантарасси – нацин стратегиллĕ тĕллевĕ» темăна вара кайран, çурла уйăхĕн 25–26-мĕшĕсенче, Тăвай енри вĕрентекенсем сÿтсе явнă, хăйсен тĕллевĕсене палăртнă. Пирĕн районта кăçал пурĕ 1464 вĕренекен парта хушшине ларчĕ, пĕрремĕшĕсем – 137. –Раççей Федерацийĕн Президенчĕ 2018 çулхи май уйăхĕнчи указĕнче историпе наци культурин йăли-йĕркине, ăстăн тата кăмăл-сипет пахалăхĕсене тĕпе хурса ачана килĕшÿллĕ аталантармалли тата социаллă яваплăха воспитани памалли тĕп тĕллев пулнине палăртнă. Шкулччĕнхи воспитание илес пулсан, ашшĕ-амăшĕн ача садĕнчи вырăнпа тивĕçтерни кăна çителĕксĕр, унта ăна мĕнле воспитани пани те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ку енĕпе воспитательсен хăйсен квалификацийĕсене ÿстерни те кирлĕ,–тенĕ педагогсен советĕнче вĕрентÿ пайĕн начальникĕ О.Ломоносов. – «Ачаллă çемьесене пулăшасси» регионти проектпа килĕшÿллĕн районта консультаци пункчĕ йĕркеленĕ. Кашни ашшĕ-амăшĕ унта тĕрлĕ енлĕ пулăшу илме пултарать.

«Вĕренÿ» наци проекчĕн регионти «Хальхи шкул» тата «Цифрăллă вĕренÿ хутлăхĕ» проекчĕсем шăпах çак енĕпе ĕçлеме çĕнĕ майсем туса параççĕ. Шкулсенче цифра тата гуманитари профильлĕ «Ÿсĕмсен çулĕ» центрсем уçăлаççĕ. Иртнĕ çул çакăн пек центр ĕçлессине Тăвайри вăтам шкулта, пурĕ республикăри 40 вĕренÿ çуртĕнче йĕркеленĕ.

Районти вĕренÿ системи кăçал дистанци мелĕпе кăлтăксăр ĕçленине палăртнă доклад тăвакан. Воспитани ĕçне тивĕçлĕ шайра вĕрентекен те туса пырать. Класс ертÿçисем ку тĕллевпе ашшĕ-амăшĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлеççĕ. Олег Анатольевич районти педагогсене Пĕлÿ кунĕпе саламланă, професси тивĕçĕсене çĕнĕ вĕренÿ çулĕнче ăнăçлă туса пыма суннă. Унтан ĕçре малта пыракансене наградăланă.

Тăвай енре физкультурăпа, спортпа туслашма мĕнпур услови çителĕклĕ, пурлăхпа техника базин никĕсĕ çирĕп. Хоккей коробкисем, шкулсенче спорт залĕсемпе площадкисем пурри пысăк пулăшу кÿрет. Ялсенчи спорт залĕсене тĕпрен юсассине пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Районта темиçе çул каялла кăна хута янă «Аль» спорткомплекс çынсене аван тивĕçтерет, унăн урамри территорийĕнче вырнаçтарнă оборудованисемпе вара, тĕрлĕ хусканусем туса, сывлăха çирĕплетме пулать.

Физкультурăпа спорта юратма вĕрентессипе нумай çул ĕçлесе ырă тĕслĕх кăтартнăшăн Йăнтăрчăри вăтам шкул вĕрентекенне, «Аль» спорт комплексĕн тренер-преподавательне Николай Петрович Степанова «Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ» хисеплĕ ят панă.

1955 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче Тăрмăшра çутă тĕнчене килнĕ вăл.

Ялти шкулта, вăтам пĕлÿ илсе, аттестатлă пулнă хыççăн Чĕмпĕрти патшалăх педагогика университетне çул тытнă. Аслă пĕлÿ илсен каччăна 1978 çулта Амалăхри сакăр çул вĕренмелли шкула ĕçлеме янă. Пĕр вăхăт Н.Степанов Тăрмăшри культура çуртĕнче концертмейстерта, унтан художество руководителĕнче те тăрăшнă.

Йăнтăрчă ялĕнчи сакăр çул вĕренмелли (халĕ вăтам) шкулта физкультурăпа спорта юратакан ачасене воспитани парассине вара 1981 çулта кÿлĕннĕ, паянхи кунччен унти çула такăрлатать. Тăрмăшри Анаткас урамĕнче пурăнать вĕрентекен, пахчаçимĕçпе çĕрулми акса-лартса çитĕнтерет, лайăх тухăç туса илет. Кил хуçалăхне таса тытать сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăнаканскер.

Тĕп ĕçне çÿллĕ шайра пурнăçланине кура çаврăнăçуллă педагога 1982 çулта районти ача-пăчапа çамрăксен спорт шкулĕнче (халь «Аль» спорткомплекс) ĕçлеме чĕннĕ. Николай Петрович 9–18 çулсенчи хĕрачасемпе тренировкăсем ирттерме тытăннă, волейболла выляма хăнăхтарнă. Тăрмăш чиперккисем, ак, республикăра волейболла выляссипе малта пулнă.

Педагогика, методика совечĕсен ĕçĕсенче ырă тĕслĕх кăтартать пултаруллă специалист, ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсене, сывлăха çирĕплетекен тата воспитание лайăхлатма пулăшакан мероприятисене хутшăнать. Хăйĕн пĕлĕвне çĕнетсех тăрать çуллен тĕрлĕ курссенче, нумай вулать, харпăр хăй тĕллĕн вĕренет. Районти ăмăртусенче тăтăшах курма пулать ăна, судья пулса ачасен чупăвне кăмăллать хаклать.

Юлашки пилĕк çул хушшинче Н.Степанов тренер-преподавателĕн тĕрлĕ ÿсĕмри вĕренекенĕсем республикăри ăмăртусенче çăмăл атлетикăра тата утса, тимĕр пÿске (ядро) тĕртсе çĕнтерÿçĕ, призер пулса тăнă. Пултаруллă ачасен спискĕ вăрăм.

Тренер-преподаватель пухмачĕнче – массăллă спорт разрячĕсен нормативĕсене пурнăçа кĕртнĕ спортсмен чылай. Тăххăрĕшĕ пĕрремĕш разряд нормативĕсене пурнăçланă. Спорт мастерĕн кандидачĕсем те пур. Тăвата вĕренекенĕ Шупашкарти олимп резервĕн училищинче пĕлÿ пухаççĕ. И.Шулаева кăçал Сочи хулинче хăвăрт утса спорт мастерĕн кандидачĕ пулса тăнă. А.Александров чупса Раççейри ăмăртура виççĕмĕш вырăна тухнă. Иртнĕ çул Д.Иванова хăвăрт утассипе республикăри ăмăртура иккĕмĕш вырăна тухнă. Ку енĕпе М.Германова, Л.Николаева, А.Александров çитĕнÿсем тунă, пĕрремĕш разряд нормативĕсене пурнăçланă. А.Бухмаров, Н.Емельянов, А.Краснов, Л.Николаева çăмăл атлетикăра палăрнă. Ю.Павлов, Н.Емельянов, Е.Михайлов, К.Емельянова кире пуканĕ йăтса пĕрремĕш разрядлă спортсменсем пулса тăнă. Тимĕр пÿске (ядро) тĕртсе палăрни те пур вĕренекенсем хушшинче.

Спорт мастерĕн кандидачĕсене те ырăпа асăнать тренер-преподаватель: «Денис Воробьевпа Владимир Александров çăмăл атлетикăра, Вера Матвеевапа Ирина Шулаева хăвăрт утса, Полина Салмина кире пуканĕ йăтса, Сергей Данилов та çитĕнÿсемпе савăнтарчĕç. Тăрăшни харама каймасть çапла. Шкултан вĕренсе тухса кайсан та спортпа туслашассине çирĕплетсех пыраççĕ вĕсем, сывă пурнăç йĕркине пăхăнаççĕ».

Вĕрентекенне манмаççĕ çамрăксем, унăн ĕçĕпе, кăмăл-туйăмĕпе интересленсех тăраççĕ. Çак кунсенче Николай Петровича хисеплĕ ят панипе саламлама та ĕлкĕрнĕ.

–Воспитани стратегийĕн пĕрремĕш çул-йĕрĕ – çемьери воспитани. Тăвай енри вĕренÿ учрежденийĕсенче воспитани ĕçне ашшĕ-амăшне явăçтарма лайăх условисем йĕркеленĕ: шкулсенче ашшĕ-амăшĕн комитечĕсем, ашшĕсен канашĕсем ĕçлеççĕ, ачасен интересĕсене тата тĕп прависене хÿтĕлесе çĕклекен ыйтусене ашшĕ-амăшĕн пĕрлĕхĕсенче сÿтсе яваççĕ. Йăнтăрчăри вăтам шкулта та, ак, «Ĕçпе хÿтĕлеве хатĕр» нормăсене пурнăçлассине йĕркеленĕ. «Спорт – пурнăç норми» проектпа килĕшÿллĕн пирĕн районта чылай ĕç тăваççĕ,–тет Николай Петрович.

Унăн вĕрентÿ сферинчи ĕç стажĕ 40 çул, пĕрремĕш категориллĕ, аслă пĕлÿллĕ специалист вăл.

Спорта аталантарас енĕпе пысăк ăсталăх кăтартнăшăн Н.Степанова «Çут ĕç отличникĕ» знакпа, Чăваш Республикин физкультурăпа спорт министерствин, район администрацийĕн, вĕрентÿ пайĕн Хисеп грамотисемпе наградăланă. Халĕ вăл – Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ работникĕ. Çак ятпа саламлатпăр ăна, ачасене лайăх воспитани парас ĕçре тата пысăкрах ăсталăх кăтартма сунатпăр.

Пурнăç урапи малалла çаврăнать. Çĕнĕ вĕренÿ çулне хаваслă кăмăлпа пуçланă физкультурăпа спорта юратма хăнăхтаракан. Эрнере виçĕ хутчен – тунтикун, юнкун, эрнекун – ачасене тренировка занятийĕсенче яланхи пекех ăшшăн кĕтсе илме хатĕрленет. Çирĕм ача çырăннă, Йăнтăрчă, Тенеяль, Улянкă ялĕсенчен çÿреме пуçлĕç секцине юпа уйăхĕнче.

Николай Петрович Степанов вĕрентекен профессине суйласа илнĕшĕн чунтан савăнать. Ăслă, компетентлă, пултаруллă, культурăллă, ырă кăмăллă, сăпайлă педагог воспитани пахалăхне татах та лайăхлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тимлет.

**А.НИКИТИНА.**